**Демонстрационный вариант**
**контрольно-измерительного материала для**
**промежуточной аттестации в форме диктанта в 5 классе МБОУ**
**«Старосаврушская ООШ» Аксубаевского муниципального района РТ**
**по родному (чувашскому) языку**

Кайӑк пурнӑҫӗ

Ҫынсенни пекех, кайӑксен те кашнин хӑйӗн юрри-кӗвви, хӑйӗн савӑнӑҫӗпе хурлӑхӗ, хӑйӗн тусӗсемпе тӑшманӗсем пур иккен. Пӗр кайӑкӑн юрри ансат, тин калаҫма вӗренекен ача сӑмахӗсем пек. Теприн кӑткӑс, пуян, вун ик кукӑрлӑ. Пӗр кайӑк вӑрманта сӑпай кӑна пурӑнать, никама тивмест, никама кансӗрлемест. Тепри пурне те хӑвалать, пурне те хӗсӗрлет.

Сасартӑк темле кайӑк кӳлӗрен вӗлтӗртетсе чупса тухрӗ. Ишсе мар, чупса тухрӗ, мӗншӗн тесен вӑл шыв айӗнче те ҫӗр ҫинчи пекех ҫӳрет иккен. Вӑл хӑйне валли апат-ҫимӗҫ шырать. Вӑрман ҫерҫийӗ теҫҫӗ ӑна. (90 сӑм.) (К.Турхан.)